# Юрă

*Хусанти тĕн семинарийĕн протекторне*
*Амвросий Подобедова халалланă,*
*авалхи грекла çырнă*

Тинкерĕр-ха танлăн пăхса
Çак чаплă, çап-çут йыш тавра.
Куратăр, паллатăр савса
Ӳнерлĕхри пĕтĕм ырра.
Юрлаççĕ вĕсем мухтаса,
Мухтав юрри хӳхĕм, черчен.
Калаççĕ вĕсем ырласа
Сана, тарăн ăслă ĕçчен.
Çыхаççĕ пуçна тăрăш са
Хитре ылтăн кăш ăл вĕсем.
Çакна курса тăнă çинчен
Ыйтайрăм эп музăсенчен
Самант çеç шăпраххăн тăма,
Вара итлеме ерипен
Чунтан тухакан сассăма:
«Каять пирĕнтен çул ертӳç.
Каять пирĕн хӳтлĕх кĕтӳç,
Юратнă, хисеплĕ хăна».
Илтетĕп каллех вĕсен харсăр
Çынна мухтакан юррине:
«Каять вăл пачах хăрамасăр
Хăйне ăнăçу пур çĕре,
Мĕнле чăтмалла кулянмасăр –
Пире сансăр йывăр сĕре.
Çапах савăнатпăр та хамăр –
Манмастăн-çке эсĕ пире!
Ыр пиллĕх сан пирĕн çине.
Турра пуç çапатпăр чунтан,
Çулу такăр пултăрччĕ сан!
1795

*Бичурин, Н. Юрă / Н. Бичурин // Чăваш сăмахлăхĕ : 10-мĕш класăн вĕренӳпе вулав кĕнеки / Н. Г. Иванова, В. П. Никитин пухса хатĕрленĕ. – Шупашкар, 1993. – I пай. – С. 247.*